ТĂВАН ÇУТ ÇАНТАЛĂК

Çу уйăхĕнчи кăларăм

ТИМЛĔХ ЫЙТАТЬ

Шывăн ырлăх кӳмелле

Ĕмĕртенпех юхса выртаççĕ Тăвай ялĕ витĕр Эльпе Тăм шывĕсем. Çак хушăра вĕсем ырлăхне те, шырлăхне те кӳнĕ ял çыннисене. Пĕр çулхине вайлă çумăрсене пула çырансенчен ейӳ тухса пурăнмалли çуртсемпе хуралтăсене, урамсене, çулсене шыв илни те пулнă. Анчах шывăн ырлăхĕ çав-çавах нумайрах. Уйрăмах çу вăхăтĕнче. Вăл – тавралăх илемĕпе чĕрĕлĕхĕ те, çынсен шанăçĕпе пушар хăрушсăрлăхĕ те. Шывĕ пулсан, çырансем унпа тулса тăрсан, пулăсем те, ытти чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк те ĕрчеççĕ. Ачасемпе çитĕннисем шыва кĕрсе савăнаççĕ. Çырансен хĕррисемпе йывăç-курăк хунать. Çутă шывра каçсерен уйăх та çăвăнса тасалать.

Шел те, Эльпе Тăм шывĕсем ял çыннисене çак ырлăха туллин парнелеймеççĕ-ха. Пахчасене шăварас тетĕн, шывĕ тĕпĕнче çеç, шăрăх кунсенче шыва кĕрсе уçăлас, савăнас, тасалас тетĕн – каллех çырансем шывсăр. Тăвай – пĕчĕк ял мар, вăл – район центрĕ. Ун витĕр икĕ юхан шыв юхса выртса та пĕр пĕве, шыва кĕмелли ятарлă пĕр вырăн та çукки ыттисемшĕн лайăх тĕслĕх мар ĕнтĕ. Пăшăрхантармалли сăлтав. Çитменнине, çултан-çул çапла тăсăлать. Каллех шыва каясран асăрханатпăр-и е пуçарулăх çитмест? Вăл та, ку та пулĕ. Анчах шывĕ пур çĕртех шывсăр пурăнни кăмăллă япала мар ĕнтĕ. 3662 çын пурăнать Тăвай ялĕнче. "Аль" физкультурăпа спорт комплексĕнчи бассейнсăр пусне Тăвай ялĕнчи юхан шывсем хĕрринче çынсем валли пĕр пляжпа ятарлă шыва кĕмелли е хĕртĕнмелли вырăн та çук. Пулă тытма та çӳрес килет пулĕ ачасемпе çамрăксен, çитĕннисен пушă вăхăтсенче, канмалли кунсемпе отпусксенче. Канса килес те килет пуль тулли çырансем хĕррине. Тулли юхан шыв таврана чĕрĕлĕх кӳрет, нӳрĕк парать. Унăн шывĕ çуллахи вăхăтра пур чĕрĕ чуншăн та сиплĕ. Пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе те пĕлтерĕшĕ пысăк. Анчах мĕн чăрмантарать юхан шывсене тулли тытма? Шел те, автостанци патĕнчи сооружени те тулли шывпа савăнтараймасть паянхи куна.

И.ГЛАДКОВ.

Тирек мамăкĕ – пушар сăлтавĕ

Ăшă кунсем пушар хăрушлăхне ӳстереççĕ. Çавна май тирек мамăкĕ те пысăк хăрушлăх пулса тăрать, мĕншĕн тесен çуртсемпе хуралтăсем, тăрăпа йывăç материалсен склачĕсем таврашĕнче, автотранспорт лартакан картишĕнче, ытти çĕрте пухăнса вăл вуткăвар тивсе илмелли никĕс пулса тăрать. Тивсе илесси вара сӳнтермесĕр пăрахнă пирус тĕпĕпе шăрпăк та, çулăмпа усă курса ĕçленĕ самантсем те, ача-пăча шăрпăкпа ашкăнни те пулма пултарать. Харпăр хăй гаражĕсемпе вĕсем патĕнче, çу тăкăннă, анчах ăна вăхăтра тасатса илеймен вырăнсенче тирек мамăкĕ пухăнни пушшех те хăрушă. Кунашкал çĕрте тирек мамăкĕ кăшт вутçулăмпах хыпса илсе хăвăрт сарăлма пултарать. Ун пек инкек тӳснĕ тĕслĕхсем çынсен харпăр хăй гаражĕсенче сахал мар пулнă.

Пушар хăрушлăхĕ пысăк тапхăрта хăрушсăрлăх правилисене уйрăмах çирĕп пăхăнса пурнăçласа пыни кирлĕ. Пухăннă тирек мамăкне, йывăç хуралтăсем çумĕнчине уйрăмах, çийĕнчех пуçтарса илме тимлемелле, унпа ачасем ашкăнасран сыхланмалла. Предприятисемпе учрежденисен пирус туртмалли йĕркене пăхăннине тĕрĕслесе тăмалла, çӳп-çапа çунтарма, кăвайт чĕртме чармалла, сварка тунă, çулăмпа усă курса ĕçленĕ чухне тимлĕхе ӳстермелле, территоринче цистернăпа е пичкепе шыв, пушар сӳнтермелли хатĕрсемпе /огнетушительсем, хăйăр, пакурсем, кĕреçесем/ щитсем вырнаçтармалла, çуллахи шыв пăрăхĕсене ĕçе кĕртмелле. Ирĕклĕ пушар дружинисем дежурство тăрассине йĕркелемелле. Çуллахи вăхăтра пушар хăрушсăрлăхĕпе хушма инструктажсем ирттермелле.

В.МИХАЙЛОВ,
районти пушар надзор пайĕн начальникĕ.

О.Восторгин предпринимателĕн /Амалăх/ Паснерти "Ялти усадьба" туризм базинче. Кунта канма килекенсене условисем туса парассипе малалла ĕçлеççĕ, строительство ĕçĕсем пыраççĕ.

Анюта ГЛАДКОВА /Тăвай шкулĕ/ сăн ӳкерчĕкĕсем.

Усă курмалла

Районти кашни ялта тенĕ пекех пурăнман пӳрт-çуртсем вуншар. Çапла пирĕн ялта та, Кивĕ Пуянкассинче, пысăк мар ял пулсан та, пурăнман пӳртсем утмăла яхăн. Çавна май пахчаçимĕç лартман пушă вырăнсем те çук мар. Ял ватăлса пырать мар-и? Çамрăксем ытларах хулана туртăнаççĕ çав. Ватăсен вара вăй-халĕ чакса пырать çĕр ĕçĕпе тăрмашма. Пахча тенĕрен, хăш-пĕр çамрăксем ашшĕ-амăшĕн йăли-йĕркине пăхăнса пурăнма, вĕсен ĕçĕсене малалла тăсма ăнтăлмаççĕ, çавах вĕсенчен хăшĕпĕри хăйсене мăнна хурать. Çапла эпĕ пĕлекен пĕр çемье пахчинче çум курăк ашкăрать. Пĕр йăран та пулин çĕр улми лартинччĕ хăть, çук вĕт, çапах тăранкаласа пурăнаççĕ. Мĕн тăвăн, хырăм пĕрех выçать-çке.

Çавăнпа, ял тăрăхĕсенче инвентаризаци пынă май, пушă выртакан пахча лаптăкĕсене пĕтĕмпех шута илсе вĕсемпе тухăçлă усă курма тăрăшмалла.

Ф.ПЕТРОВ.
Кивĕ Пуянкасси ялĕ.

Ниме йывăçĕсем

Тăрăшсан, çынсем тавралăха нумай çĕнетме пултараççĕ. Сăхăтпуç ялĕнчи Ф.Ф.Портнов учитель хăй вăхăтĕнче ларттарнă йывăçсем халĕ вăрман лаптăкĕсем пулса кайнă. Хурăнсемпе хырсен лаптăкĕсем, тирексен тăрăхĕсем... Сăхăтпуç таврашне мĕн тери илемпе хӳтлĕх кӳреççĕ вĕсем хальхи вăхăтра. Тем пекех тав сăмахĕ калаççĕ вĕсемшĕн ял çыннисем çут çанталăк тусне. Хăйĕншĕн те ĕмĕрлĕх çут çанталăк палăкĕсем пулса юлнă асăннă симĕс лаптăксем.

Ырă çимĕçĕн вăрри паха теççĕ. Тăват-пилĕк çул каялла сăхăтпуççем çапла субботник ирттерсе асфальтлă çул енчен яла пырса кĕнĕ çĕре çамрăк йывăç хунавĕсемпе калчисем лартса тухнăччĕ. Тăват-пилĕк ретпе лартнă вĕсене Сăхăтпуç çумĕпе иртекен асфальтлă çултан пуçласа ял хĕррине çитиччен. Унтан, П саспалли евĕр вырнаçтарса, Сăхăт çырми еннелле те лартса кайнă. Йышпа кал-кал пынă ĕç. Икĕ-виçĕ çул каялла вара хăрнисем вырăнне çĕнĕрен лартса тухнă. Парка аталанаççĕ халĕ çамрăк йывăçсем – чăрăшсемпе хырсем, хурăнсем, акацисем... Халех хитре вĕсем. Хăйсене пурнăç панă çынсене тав тунăн кулленех чиперленсе ӳсеççĕ.

Л.ИВАНОВА.

Всесоюзная сельскохозяйственная перепись – 2016



Пикенеç çăлĕ

СОНЕТСЕМ

Юхатăн миçе ĕмĕр ывăнмасăр.
Эс харсăр Пикенеç вут-юхăпа:
Йăлăхтарать-им вырăн ыткăнмасăр?
Канмасăр мĕн пуплетĕн халăхпа?
Сăхăтпуçсем телейлĕ тетĕп эпĕ.
Шыву савăнтарать ĕçме тăрсан.
Мухтав сăмахĕ ун чухне итлетĕп,
Сăмах майне сан еннелле пăрсан.
Кашни тумламĕ – манăн чун саламĕ.
Саланĕ тинĕсре кунтан кайсан.
Ăсаннă ачине амăшĕ манмĕ,
Пиллев çитет пĕр шайлă пайласан.
Асамлă Пикенеç, эс тĕслĕх патăн!
Пур-и виçи ку чухнехи тахатăн?!

х х х

Сăнна сăнатăп Пикенеç çинче,
Çемçе сасси сан калаçу уççи пек...
Темле тахат юххи каять инçе
Е ярăм-ярăм чӳхенет-и çивĕт?
Вĕлтлетрĕ шухăш: шел е тарăху
Санра чĕтреç çак ĕмĕрсем таран?
Эс Атăлра çĕклетĕн пăрахут,
Анчах кунтан мĕн сăлтавпа васкан?
...Эс тарăн ĕмĕт шухăшпа пуян.
Тулли телейĕн ăраскалĕ пысăк.
Ӳпкелешӳ виçишĕн ан кулян,
Хăш тавлашу ыттишĕн питĕ кăсăк?
Пулать, çӳлтен ӳксен те савăнатăп;
Çăл шывĕпе вăй-халшăн çăвăнатăп!

Лаврентий ДАНИЛОВ.
Ульяновск хули.

/Кăларăма хаçатăн экономика пайĕн редакторĕ И.ГЛАДКОВ хатĕрленĕ/.